25-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ИЮНЬ
13
ВЫРСАРНИКУН
122(6359) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çураки вăхăтĕнче пысăк ĕç тухăçлăхĕ тата лайăх пахалăх кăтартса ĕçленĕшĕн, ĕçсыннисен депутачĕсен Шупашкар хула совечĕн исполкомĕпе ВКП(б) горкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

149. **Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **А. А. Афанасьев**). Колхоз 1943 çулта хула колхозĕсенчен пуриничен малтан тĕнтырă культурисене акса тата çĕрулми лартса пĕтернĕ.

150. **А. М. Трефимов** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕ. Вăл çуракинче суха тунă тата тырă акнă çĕрте ĕçлесе ĕç нормине кулленех 140 процент тултарса пынă. Вăл çуракинче тата пахалăх комиссийĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

151. **Н. М. Назарова** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕ. Ĕç нормине çулсеренех иртерсе тултарса пырать. Колхоз правленийĕ хушнă пур ĕçсене те вăхăтра тата лайăх туса пырать. 1943 çулта Назарова юлташ 86 ĕçкунĕ тунă, вăл шутран 15 ĕçкунне çуракинче тунă.

152. **И. И. Тимин** — «Красный партизан» колхоз членĕ. Вăл çуракинче ĕç нормине кунсеренех 150 процент тултарса пынă. 1943 çулта Тимин юлташ 107 ĕçкунĕ тунă, вăл шутран 40 ĕçкунне çуракинче тунă. Лайăх ĕçленĕшĕн Тимин юлташа темиçе хутчен те премисем панă.

153. **М. Н. Лобышева** — «Красная Волга» колхоз членĕ. Лобышева юлташ çуракинче суха тунă, ĕç нормине кулленех 150 процент тултарса пынă. Лобышева юлташ 1943 çулта 105 ĕçкунĕ тунă, вăл шутран 25 ĕçкунне çуракинче тунă. Лобышева юлташ общественлă ĕçе те активлăн хутшăнса лайăх ĕçлесе пырать.

Большевикла агитацин витĕмлĕхĕпе пахалăхĕшĕн

Парти Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XV-мĕш пленумĕ республикăри агитациллĕ-массăллă ĕç çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕн Андреев юлташăн докладне сӳтсе-явнă.

Партин облаçри организацийĕ туса ирттернĕ агитациллĕ-массăллă ĕç республикăри ĕçсыннисене Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн, фронта пулăшассине вăйлатассишĕн çине тăрса кĕрешме, ĕçсыннисен чĕрисенче совет патриотизмĕн туйăмне ӳстерсе лыма тата тăшмана пĕтĕм чун-чĕререн курайманлăх пурăнма вĕрентрĕ. Республикăри рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци большевикла парти тата юратнă аттемĕр Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пĕтĕçрĕç.

Вăрçă вăхăтĕн йывăрлăхĕсене сĕнтерсе, пирĕн республика 1942-мĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государствăна тырпул тăратмалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртнĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ситĕнӳсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премие илчĕ.

Республика кăçал çуракине пĕлтĕрхинчен 12 кун маларах вĕçлерĕ. Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Республикăра тĕп вырăн йышăнса тăракан промышленноçăн пысăк предприятийĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пĕр хутчен мар мала тухнă. Транспорт, вырăнти промышленность, промкооперации хăйсен ĕçне лайăхлатса пыраççĕ. Республикăри ĕçсыннисем фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăраççĕ.

Çак ситĕнӳсене агитациллĕ-массăллă ĕçе республика умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессипе конкретлăн та тĕрĕссĕн çыхăнтарса пырса тунă. Агитаторсен политикăллă пĕлĕвĕ ӳссех пырать, парти горкомĕсемпе райкомĕсем вĕсене лайăхрах ертсе пыма тытăнчĕç. Массăллă-политикăллă ĕçсене партипе совет работникĕсем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансем активлăнрах хутшăнма пуçларĕç.

Анчах çакăнпа пĕрлех республикăри агитациллĕ-массăллă ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур-ха. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем агитаципе пропаганда ĕçĕн пахалăхне ӳстерессишĕн сителĕксĕр кĕрешеççĕ. Партин хăшпĕр горкомĕсемпе райкомĕсен секретарĕсем агитаципе пропаганда ĕçне ертсе пырассине пĕтĕмĕшпех пропагандăпа агитаци отделĕсем çине йăвантарнă. Вĕсем пропагандăпа агитаци ĕçĕн пур ыйтăвĕсене те тĕпчесе вĕренессишĕн, ку ĕçри паха опыта пухассишĕн тăрăшмаççĕ. Вĕсем агитациллĕ-пропагандăллă ĕç партиллĕ пĕтĕм ĕçĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнине манаççĕ. Çавна пула вĕсем агитколлективсен руководителĕсемпе агитаторсене сителĕксĕр пулăшаççĕ, семинарсемпе канашлусем йĕркеллĕ туса ирттермеççĕ. Партипе совет активĕнчи чылай юлташсем юлашки вăхăтра хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеме чарăннă. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем хăйсен парткабинечĕсен ĕçне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци Управленийĕ хушнă пек çĕнетсе йĕркелемен-ха.

Пленум политикăллă агитаци чылай районсенче (Куванкино, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле) витĕмсĕр пулнине палăртрĕ. Партин çак райкомĕсем агитациллĕ-массăллă ĕçе ку тапранăчченех хуçалăхла задачăсене пурнăçлассипе çыхăнтарса туса пыма вĕренеймен. Çавна пула асăннă районсенче хуçалăхри чылай ĕçсем юлса пыраççĕ.

Партин нумай организацийĕсем рабочисем пурăнакан общежитисенче, колхозниксемпе ĕçсыннисен хваттерĕсенче, çамрăк рабочисемпе çар çыннисен çемйисем хушшинче политикăллă агитаци тăвассине тивĕçлĕ хак памаççĕ. Çавăнпа Канаш, Шупашкар, Çĕмĕрле т. ыт. хуласенчи предприятисенчи партипе комсомол организацийĕсем çамрăк рабочисене производствăра ĕçлеме вĕрентес, вĕсене политикăллă воспитани парас, вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пачах сителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вăтам шкулсемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсене политикăллă воспитани парас ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать. Промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, вырăнти промышленноçăн артелĕсенче агитаци ĕçне тăван чĕлхене туса пымаççĕ.

ВКП(б) Шупашкар, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем, сутĕç учрежденийĕсем çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ, хăшпĕр чухне сутĕç учрежденисен ĕçне пачах хакламаççĕ. Ĕçсыннисене (уйрăмах ялти ĕçсыннисене) кино кăтартассишĕн, радио итлеме майсем тупса парассишĕн тăрăшмаççĕ. Çакă пĕр ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем вырăнти кинотеатрсен, киноустановкăсен тата радиоузелсен ĕçĕпе интересленменнинчен килет.

Республикăри тата районсенчи хаçатсен ĕçĕнче те пысăк ситменлĕхсем пур. Вĕсем предприятисен, колхозсен, артельсен, учрежденисен ĕçне тарăннăн тĕпчесе вĕренеймен-ха, критикăллă материалсем сахал пичетлеççĕ, партипе комсомол организацисен пурнăçне сителĕксĕр сутатса тăраççĕ. Чылай районсен хаçатсем (Шăхасан, Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай) район пурнăçне çиелтен çеç сутатса тăраççĕ. Апла пулин те ВКП(б) райкомĕсем хăйсен районĕсенчи хаçатсене тата стена хаçачĕсене тивĕçлипе ертсе пымаççĕ.

Партин Куванкино, Вăрнар, Илпек, Шупашкар, Йĕпреç т. ыт. хăшпĕр райкомĕсен пропагандăпа агитаци пайĕсенче ĕçлекенсем ситмеççĕ. ВКП(б) райкомĕсем вĕсене тупас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Хăшпĕр районсенче пропагандăпа агитаци пайĕсен работникĕсемпе йăнăш усă курас практика пур — вĕсене пĕр ялсовета е колхоза чылай вăхăтлăха уполномоченнăйсем туса яраççĕ. ВКП(б) Обкомĕн Пленумĕ çак сиенлĕ практикăна сивлерĕ.

Пленум ВКП(б) Обкомĕн бюроне, парти райкомĕсемпе горкомĕсене агитациллĕ-массăллă ĕçри ситменлĕхсене сывăх кунсенчех пĕтерме хушрĕ. Массăллă-политикăллă мĕнпур ĕçе Сталин юлташ майăн пĕррремĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассине пăхăнтарса туса пымалла.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен агитаципе пропаганда ĕçĕн пахалăхне ӳстерессишĕн, агитаци ĕçне витĕмлĕн те йĕркеллĕн туса пырассишĕн, агитаторсемпе пропагандистсем хушшинче ĕçлессине вăйлатассишĕн, вĕсем валли ĕçлеме мĕнпур майсене те туса парассишĕн большевикла кĕрешмелле.

Пленум предприятисенчи парторганизацисене тата ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене çĕрлехи сменăсенче, общежитисенче, ĕçсыннисен хваттерĕсенче агитаци ĕçне лайăх йĕркелесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушрĕ.

Пленум ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене промышленноçпа транспорт тата вăрман предприятийĕсенче, колхозсемпе совхозсенче, МТС-семпе учрежденисенче массăллă-политикăллă ĕçе пĕр чарăнмасăр йĕркеллĕ туса пыма, промышленноçпа транспорт тата социализмлă çĕрçĕн работникĕсене, мĕнпур совет интеллигенцине тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне хальхи вăхăт ыйтнă пек пурнăçламашкăн мобилизацилеме хушрĕ.

Çутĕç учрежденисем сӳрĕк ĕçленине палăртса, пленум парти райкомĕсемпе горкомĕсене вулав çурчĕсен, колхоз клубĕсен ĕçне тĕппĕн лайăхлатма, ĕçлеме чарăннă мĕнпур вулав çурчĕсемпе клубсене кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен юсаса йĕркелеме хушрĕ.

Пленум палăртнă ситменлĕхсене пĕтерсе, агитациллĕ-массăллă ĕçе большевикла тимлĕхпе туса пырар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 11-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусем пулман.

Пирĕн авиаци Финн заливĕнче тăшманăн хуралта çӳрекен катерне тата транспортне путарнă.

* * *

Июнĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинăна ситти пĕтерсе пăснă е сиенленĕ, боеприпассемпе горючин темиçе складне сирпĕнтернĕ, 2 чугунҫул эшелонне çĕмĕрнĕ, тăшман пехотине 2 рота яхăна ситти сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕç салтакĕсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă, 12 дзотпа блиндажа çĕмĕрнĕ, тăшманăн артиллерийĕпе миномечĕсен темиçе батарейине пусарнă. Уйрăм участоксенче гитлеровецсем çапăçса разведка тума хăтланнă, анчах та вĕсене малтанхи позицисем çине ывăтса янă.

* * *

Калинин фронтĕнче Чупров юлташ командир пулса тăракан чаçăн подразделенийĕсен танкистсем разведка тăвас шутпа тăшмана атакăланă. Танкистсем 13 пулемет, противотанковăй тупă пĕтерсе тăкнă, 10 дзота ишĕлтернĕ тата 150 гитлеровеца ситти вĕлернĕ. Пĕр чаçри боецсем упкăнĕ тăшман засадине асăрханă та пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехри пĕр участокра нимĕçсем меллĕ позицисене тытса илес тесе тепĕр хут хăтланса пăхнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Пирĕн боецсем икĕ кун хушшинче 400 гитлеровеца ситти вĕлернĕ, нимĕçсен 8 танкне çунтарса янă, 6 танкне персе çĕмĕрнĕ, артиллери батарейине тата миномётсен батарейине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери нимĕç пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн обозне аркатнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Севск районĕнче пирĕн разведка тăшманăн танкĕсем тата пехоти пĕр çĕре пухăнса тăнине асăрханă. Совет авиацийĕ çав танксемпе пехота çине сывлăшран бомбăсем пăрахнă тата вĕсене штурмланă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе пулеметсенчен персе, тăшмана пысăк сухатусем пӳстернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне ситти вĕлернĕ, 17 дзота, 5 наблюдательнăй пункта ишĕлтернĕ тата 8 огневой точкăна аркатнă.

Ленинград патĕнчи сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем 8 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Черниговс облаçĕнчи партизансен отрячĕ июнĕн 3-мĕшĕнче халăх пурăнакан пысăк пунктра вырнаçнă тăшман гарнизонне сасартăк тапăннă. Партизансем, казармăна темиçе вунăшар граната пăрахса, пиртĕ нумай гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Темиçе кун иртсен, партизансем чугунçул станцине тапăннă. Нимĕçсен хурĕç тăнă пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем горючи складне тата виçĕ тонна турттаракан темиçе автомашинăна çунтарса янă, чугунçула сирпĕнтернĕ, водокачкăна тата телефонпа телеграф станцине аркатса тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш полевой штрафной батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Эрих Андрес çапла каласа панă: «Штрафной батальонра çынсем питĕ тĕрлĕ. Унта наказани шучĕпе салтаксем, моряксем, летчиксем тата тĕрлĕ йышри çарти офицерсем тăраççĕ. Сăмахран, 2-мĕш ротăра нимĕç полковникĕ Лунд тăрать. Салтаксем йăлтах начарланса ситнĕ. Часть тăракан вырăнтан ыйтмасăр кайнăшăн вĕлереççĕ. Юлашки тăватă уйăх хушшинче 46 салтака асаплантарса вĕлернĕ. Вĕлермелле тунисене 6 сынтан ятарласа тунă команда персе вĕлерет. Çав командăна пуçĕнче унтер-офицер Вилли Гарц тăрать».

* * *

Югославири партизансем нимĕçсемпе итальянецсен оккупанчĕсен йышлă атакисене сире-сире яраççĕ, оккупантсене пысăк сухатусем тӳстереççĕ. Горанский-Вольчик-Тьентиште участокĕнче партизансем, хаярран çапăçса пырса, нимĕçсене каялла чакарнă. Вучево тăвĕн айккисенче партизансем нимĕç колоннине пĕтерсе тăкнă. Словенире партизансем итальянецсен отрядне аркатса тăкнă, 29 итальянец салтакне вĕлернĕ е амантнă. Белая Крайнăра патриотсем итальянецсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче 50 ытла итальянец салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕçĕн лейтенант Афанасьев командир пулса тăракан подразделенири артиллеристсем тăшманăн пехотине пĕр ротăна ситти сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри снайперсем пĕр талăк хушшинче 80 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Снайперсем Клевцов, Петров тата Тенякашвили юлташсем каçхи икшер гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Изюмран кăнтăралларахра пирĕн разведчиксем нимĕçсен пехотин пĕр çырмана пухăнакан колоннине курнă. Пĕр чаçри артиллеристсем пеме пуçланă та çав гитлеровецсене сапаласа янă.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Белгород районĕнче пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ, артиллери хӳтĕлесе тăнипе çапăçăва кĕрсе кайса нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пĕчĕк пунктран хĕссе кăларнă. Тăшманăн 2 дзотне ишĕлтерсе антарнă тата 40 салтакне ситти пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн 20 снайпер, Совет Союзĕн Геройĕ гварди старшини Николай Ильин командир пулса ертсе пынипе, 4 кун хушшинче 123 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн подразделенисем 100 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем персе тăшманăн 13 дзочĕпе 9 блиндажне ишĕлтернĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 8 автомашина тата грузсем турттарса пыракан темиçе лава пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри разведчиксен ушкăнĕ çĕрле тăшманăн оборона сооруженийĕсене вут тивертсе янă тата темиçе гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çак юлашки кунсем хушшинче минăсем лартса нимĕçсен çар грузĕсем турттарса пыракан 5 автомашинине сирпĕнтерсе янă, заправочнăй пункта аркатса тăкнă тата 15 тонна горючи вут тĕртсе çунтарса янă. Партизансем тăшманăн темиçе тырă складне тытса илнĕ те 16.700 центнер тырра халăха валеççе панă. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ майăн 31-мĕшĕнче тăшманăн Новгород-Волынск хулинчи пысăк нефтебазин территорине кĕрсе кайнă та, хуралта тăракан салтаксене вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн 26 тонна бензин, 5 тонна нефть тата 3 тонна сĕрмелли япаласем çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 39-мĕш дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Франц Э. çапла каласа панă: «Костежен хулинче нимĕç оккупанчĕсем поляк учителĕсене, ксендзсене тата служащисене нумай персе пăрахрĕç. Çĕршер çемьене Германие ирĕксĕр ĕçе илсе кайнă, вĕсен пурлăхне йăлтах çаратнă. Костежен хулинче бургомистр пулса Хрин ĕçленĕ. Çав çынçиен халăхран пит мăшкăллатчĕ, поляксене тискеррĕн çарататчĕ, вĕлеретчĕ. 1939 çулта Костеженра 9.000 поляка яхăнччĕ. Халĕ унта поляксем 2—3 пинрен ытла юлман. Ыттисене персе пăрахнă, е концентрациллĕ лагерьсене сĕртеççĕ, е йывăр ĕçе хăваласа кайнă».

* * *

Бельги патриочĕсем нимĕçсен полевой жандармерин отрядне аркатса тăкнă. Брюссель хулинче ирĕклĕ стрелоксем 4 сутăнчăка асаплантарса вĕлернĕ. Тирламон—Лувен участокĕнчи чугунçул çинче железнодорожниксем нимĕçсен войскăсем турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Эшелон крушени тӳснĕ района гитлеровецсем пĕр кун хушши никама ямасăр хупăрласа тăчĕç. Боорт-Меербекра бельгиецсем нимĕç оккупанчĕсен фураж складне тивертсе янă. Вутра сĕлĕ тата утă нумай пĕтнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене вăйлăн пырса çапни

Июнĕн 10-мĕшĕнче каçхине тата июнăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн сывлăш-çар вăйĕсен пысăк соединенийĕсем тăшман аэродромĕсене вăйлăн пырса çапнă. Çав тапăнусене пирĕн 700 самолет ытла хутшăнна. Тăшман хăйĕн аэродромĕсене сывлăшра хурал тăракан истребительсен чылаях пысăк вăйĕсемпе хӳтĕлесе тăнă. Пирĕн истребительсем нимĕç истребителĕсемпе çапăçма тытăннă, çав майпа вара тăшманăн аэродромсенче ларнă самолечĕсем çине пирĕн бомбардировщиксем бомбăсем хăватлăн пăрахма пултарнă.

Бомбăсем пăрахнипе сахалтан та 150 нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Унсăр пуçне тата аэродромсен районĕнче сывлăшри çапăçусенче тăшман самолечĕсем вырнаçса тăракан вырăнсенче тата ангарсен районĕнче пирĕн летчиксем темĕн чухлĕ пушар тухнине асăрханă. Тăшман аэродромĕсен сывăхĕнчи горючипе боеприпассен склачĕсем пушарта вăйлăн çуннă тата унта взрывсем пулнă. Боевой заданирен пирĕн 19 самолет таврăнман.

Франклин Д. Рузвельт господина, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президентне.

ВАШИНГТОН

Агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем тĕлĕшпе Совет Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви килĕшӳ туса алă пуснă çулталăк тултарнă май, Сире, Господин Президент, пĕтĕм чĕререн саламлатăп.

Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ килĕшӳве алă пуснăранпа вăра пĕр çулталăк иртрĕ; вăл килĕшӳ пирĕн пĕрлехи тăшмана — гитлерла Германие тата Европăра унпа пĕр тавралисене хирĕç вилĕмле çапăçакан çĕршывсенчи халăхсем пĕр-пĕрине тусăн çыхăнса пурăнассине малалла сирĕплетме çул уçса парать. Çак çулталăк хушшинче çав килĕшӳ тăрăх ĕçленине пирĕн çĕршывсен халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусем тата çапăçури юлташлăх сирĕплении, вăйланчĕç. Çав çыхăнусемпе çапăçури юлташлăх малалла те сирĕпленсе пырĕç, эпĕ çакна хытă шанса тăратăп; вĕсем ССР Союзне, США-на тата Великобритание пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç пĕрле çапăçса ăна пĕтĕмпех çĕнтерес ĕçре малалла ăнăçлăхсем туса пыма, çавăн пекех тата вăрçă хыççăнхи вăхăтра ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсемпе пĕр-пĕрипе туслăн çыхăнса ĕçлеме май парĕç.

М. КАЛИНИН.

Нордели Хэлл господина, Государственный секретаре.

ВАШИНГТОН

Агрессие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем тĕлĕшпе Совет Союзĕн Правительствипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви килĕшӳ туса алă пуснă çулталăк тултарнă кун эпĕ Сире, США Правительствине тата Америка халăхне Совет Правительстви ячĕпе, Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕпе тата хамран пĕтĕм чĕререн саламласа ярă сунатăп.

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлессине сирĕплетес тĕлĕшпе те, çак вăрçă тăшмана çĕнтернипе вĕçленĕ хыççăнхи вăхăтра пирĕн çĕршывсем пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессине сирĕплетес тĕлĕшпе те çав Килĕшӳ пахă ĕç пулса тăни ăна 1942 çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче алă пуснă чухнех паллă пулса тăнă.

Ирĕклĕ çулталăк çавна кăтартса пачĕ: çав Килĕшӳ вăл Анлăх Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн çар хăвачĕ талпса тăракан никĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Эпир пĕрлехи ылханлă тăшмана пĕрле хăватлăн пыра-пыра çапса, ăна пĕтĕмпех çĕнтерессине тата фашистсем тапăнса кĕнĕ е вĕсем тапăнса кĕрес тăрушлăхра пурăнакан халăхсене çăлса хăварассине çав халăхсем пурте кĕтсе тăраççĕ. Çав пĕрлехи çапăçусенче тата эпир пĕрле çĕнтернĕ хыççăнхи Совет Союзĕ, Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата Великобритани вăрçă хыççăнхи вăхăтра та ирĕке юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсемшĕн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси ӳссе ситĕнĕ.

В. МОЛОТОВ.

Совет Союзĕпе Америка хушшинче килĕшӳ туни çулталăк тултарнă ятпа Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ патĕнче пулнă ирхи апатлану

Агрессие хирĕç вăрçăс ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен ССР Союзĕпе США пĕр-пĕрипе килĕшӳ туни çулталăк тултарнă ятпа Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ июнĕн 11-мĕшĕнче ирхи апатлану туса ирттернĕ. Апатланура США Послĕ В. Г. Стэндли господин, Великобритани Послĕ А. К. Керр господин, çавăн пекех тата Америка посольствин дипломатиллĕ составĕ тата Америкăпа Британин çар миссийĕсен пуçлăхĕсем пулнă. Советсем енчен çаксем: А. И. Микоян, А. Я. Вышинский, адмирал Н. Г. Кузнецов, генерал-полковник Ф. И. Голиков, В. Г. Деканозов, А. Е. Корнейчук юлташсем тата Наркоминделăн ответлă сотрудникĕсем пулнă.

Заем укçине срокчен татассишĕн

Пирĕн ĕçсыннисем Государствăн заемĕсене çулран çул ытларах çырăнса илеççĕ. Пĕлтĕр Государствăн Военнăй Заемне республикăра 67.013.000 тенкĕлĕх сарнă пулсан, кăçал Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне июнĕн 13-мĕшĕ тĕлнĕ 131.554.000 тенкĕлĕх сарса, укçине 88.026.000 тенкĕ хывнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 34.626.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 81.814.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 15.114.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕçсыннисем заема 10.016.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Кăçал заем укçине пухасси те пĕлтĕрхинчен лайăхрах пырать. Ку тĕлĕшпе Калинино, Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсем малта пыраççĕ.

Анчах юлашки кунсенче хăшпĕр районсенче заем сарас тата подписка укçине пухас ĕçе сӳрĕккĕн палăрать. Йĕпреç, Первомайски, Етĕрне, Куванкино районĕсенче çак ĕç чарăнса ларнă. Заем сарас ĕçре тунă ситĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар, вăл ĕçе пĕрмаях вăйлатса пымалла. Заем çырăнмасăр пĕр ĕçсынни те ан юлтăр. Заема сарнипе пĕрлех укçине пухассине ситĕнчех туса пымалла. Ку ĕçре заем уполномоченнăйĕсемпе ялсоветсен активĕн тăрăшса ĕçлемелле.

ЗАЕМА ПУРТЕ ÇЫРĂНЧĔÇ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Турикасси Кушмаряри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Государствăн 1943 çулхи Иккĕмĕш Военнăй Заемне 51.250 тенкĕлĕх çырăнчĕç, укçине те парса татрĕç. Вăл çак ĕçре ытти колхозсене пример кăтартрĕ. Колхозниксем хушшинче çĕнĕ заема плана палăртнинчен 313 процента яхăн ирттерсе сарнă. Колхоз председателĕ К. Савельев юлташ 9.000 тенкĕлĕх, К. Казаков 3.500 тенкĕлĕх, отечественнăй вăрçă фронтĕнчен канма таврăннă Петр Исаков юлташ 3.000 тенкĕлĕх, Л. Роднова 1.600 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Фронт сывăхĕнчен эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ 65 çулхи А. Камалова юлташ 1.150 тенкĕлĕх çырăнса укçине те хывнă.

Çĕнĕ заема вĕренекен ачасем те тулли кăмăлпа çырăнаççĕ. Вăтам шкулта вĕренекенсем Нина Савельевăпа А. Казакова 300 тенкĕлĕх, А. Роднов 200 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Заема 8—10 çулхи вĕренекен ачасем те çырăнаççĕ. П. Казаков, Л. Филиппова вĕренекенсем 100-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те сийĕнчех тӳлерĕç.

РУМЯНЦЕВ

ЗАЕМ УКÇИНЕ ПУХМА ТĂРĂШМАÇÇĔ

КАЛИНИНО. Мăн Элменти «Трактор» колхоз членĕсем Государствăн Иккĕмĕш Военнăй заемне 98 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çĕнĕ заема фронтовик арăмĕсем те пысăк хавасланупа çырăнаççĕ. А. Кузьмина 1.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те пачĕ.

— Манăн упăшка фронтра тăшманпа паттăррăн çапăçнăшăн орден илнĕ, эпĕ те унран юлмастăп, фронтра пек ĕçлетĕп. Фронта пĕтĕм вăйран пулăшма пулатăп, — тет вăл. Ун хыççăн П. Никитина юлташ та 2.500 тенкĕлĕх çырăнчĕ.

Анчах колхозра заема ăнăçлăн сарнипе пĕрлех, çырăннă укçине пухасси сӳрĕккĕн пынине палăртмалла. Паянхи куна çĕнĕ заемăн укçине 11.000 тенкĕ кăна пухнă-ха. Заем уполномоченнăйĕсемпе ялсовет активĕн çĕнĕ заем укçине халех пухса парассишĕн тăрăшса ĕçлемелле. Çапла ыйтать тăван çĕршыв.

А. Гурьева.
Б. Сучков.

ВИТРИНА УМĔНЧЕ

Первомайскири (Çĕрпӳ районĕ) «Ильич» колхозăн пысăк клубĕнче колхоз правленийĕ тата колхозăн библиотеки вырнаçать.

«Ильич» колхоза та, библиотекăпа та хаçатсем йĕркеллĕ килсе тăраççĕ. Правлени кун каçиччен сахал мар колхозниксемпе колхозницăсем кĕрсе тухса каяççĕ. Кам колхоз ĕçĕпе, кам кĕнеке-хаçат илме пырать тата ытти те.

Çавăнпа та колхоз правленийĕ пырса-çӳрен çынсем валли ятарласа витрина тунă. Вăл витринăна библиотека заведующийĕ комсомолка А. Николаева юлташ йĕркелесе пырать.

Витрина нихçан та пушă тăмасть, унта яланах çĕнĕ хаçат. Çавăнпа та витрина умĕнче çынсем яланах Совет Информаци Бюровĕ пĕлтеревĕсене е урăх статьясене вулаççĕ.

И. М.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти топливăна хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе ыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсем

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти топливăна хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Çĕмĕрлери «Шутово» торф предприятийĕ тата вырăнти топливо промышленность управленийĕн Красноармейски райлесзагĕ мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Тăвай леспромхозĕнчен илсе Çĕмĕрлери «Шутово» торф предприятине (торф предприятийĕн директорĕ Храмков юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Носков юлташ) памалла тунă. Предприяти торф кăларас плана май уйăхĕнче 127 процент пурнăçланă. Совнарком торф предприятийĕн социализмлă ăмăртура уйрăмăнах палăрнă работникĕсене премилеме 15 пин тенкĕ укçа памалла тунă. Торф предприятине панă суммăран торф предприятийĕн директорне Храмков юлташа тата главнăй инженера Розов юлташа кашнинех уйăхра ĕç укçи чухлĕ премиленĕ.

Çавăн пекех Чăваш АССР Совнаркомĕ Красноармейски райлесзагне (директорĕ Вишнев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Александров юлташ), май уйăхĕнче вутă хатĕрлес плана 182 процент чухлĕ пурнăçланă-скерне, ăмăртура уйрăмăнах палăрнă работникĕсене премилеме 5 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Совнарком республикăри нумай леспромхозсем, райлесзагсем тата торф предприятийĕсем май уйăхĕнче топливо хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртса, çав предприяти руководителĕсене кĕске вăхăт хушшинчех ĕçе йĕркелесе, вутă тата торф хатĕрлес плана пурнăçлама хушса хăварчĕ.

Çулйĕрсене юсамалли уйăхлăх

Юлса пыраççĕ

Çулйĕр уйăхлăхĕ республикăра начар пыни çинчен темиçе хутчен те çырнă ĕнтĕ. Анчах та хăшпĕр районсенче паянхи кунччен те уйăхлăха массăллăн тухман. Уйрăмăнах Пăрачкав, Кувакино, Чкаловски, Çĕмĕрле районĕсем ку ĕçре чăтма çук юлса пыраççĕ. Çакнашкал кая юлни вăл ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсем çулйĕр уйăхлăхĕ çине большевикла ответлăхна çаврăнса пăхманнинчен килет. Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Волков юлташ уйăхлăх пуçланни 13 кун иртрĕ пулин те, çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекен колхозниксем патĕнче пулса курман. Паллах, çулйĕр уйăхлăхне Волков юлташ пек ертсе пырсан, уйăхлăха ăнăçлăн вĕçлессине шанма çук. Çак асăннă районсем уйăхлăхра ĕçлемелли плана июнĕн 13-мĕшĕ тĕлне 3 процент кăна пурнăçланă.

Çулйĕр ĕçĕнче ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕç те тивĕçлипе пулса пымасть-ха. Çавна пула та ĕнтĕ Кувакино районĕнче çул çине ĕçлеме тухнă çынсем пĕр сăлтавсăр каялла киле кĕнĕ. Уйăхлăхăн шутлă кунĕсем çеç тăрса юлчĕç. Çак юлнă вăхăтра кашни районăн уйăхлăх графикне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн тăрăшмалла. Пур колхозсенчен те çулйĕр ĕçне массăллăн кăлармалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен уйăхлăха большевикла ертсе пымалла.

Графика срокчен пурнăçлама тăрăшаççĕ

СĔМĔРЛЕ. Вăрман Тăванри «Самолет» колхоз членĕсем уйăхлăха массăллăн тухса, ĕçĕн графикне кашни кунах иртерсе тултараççĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах Никитин юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Егоркинăри «Большевик» колхоз та çулйĕр ĕçĕнче йĕркеллĕн ĕçлесе пырать. Планпа ĕçлеме 38 çын тухмалла пулсан, куллĕнех 55 çын, 14 лаша ĕçлеме тухаççĕ. Çулйĕр ĕçне ертсе пыракан бригадир Куланов юлташ колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарнă. Кашнинех куллен-хи заданисем парса тухса, вĕсене кашни кунах кам мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесех тăрать. Анчах районри чылай колхозсем уйăхлăха хутшăнман-ха.

Х. ЛИСИН.

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне республикăра 104.690 çын хутшăннă

Республикăра профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросĕ пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне кроса пĕтĕмпеле 104.690 çын хутшăннă, вăл шутран 15.169 комсомолец.

Кроса хутшăннă 104.690 çынран 96.753 çын ГТО-па БГТО нормисене панă.

Етĕрне, Çĕмĕрле, Шупашкар, Куславкка тата Çĕрпӳ районĕсенче кросс уйрăмăнах организованно иртсе пырать.

Етĕрне районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Бурашников) кроса пĕтĕмпе 7.605 çын хутшăннă, вĕсенчен 7.208 çын нормăсем панă, Çĕмĕрле районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кощеева) 5.509 çын хутшăннă, Шупашкар районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Смирнова) 5.124 çын, Куславкка районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Кириллова) 5.081 çын хутшăннă тата ыт. те.

Анчах, çав вăхăтрах хăшпĕр районсенче кроса çителĕксĕр организацилерĕç. Йĕпреç районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Николаев) кросс уйрăмах начар пырать. Унта халь пĕтĕмпе те кроса 436 çын кăна хутшăннă. Улатăр районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Ермакова) 829 çын тата Шăхасан районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Иванов) 907 çын çеç хутшăннă.

Çак районсенчи комсомол тата профсоюзпа физкультура организацийĕсен руководителĕсен кроса ертсе пырассине вăйлатмалла, çамрăксене кроса ытларах явăçтармалла.

Çамрăксем комсомол ретне кĕреççĕ

ШĂХАСАН. Чуракасси ялсоветĕнчи «Правда» колхоз çамрăкĕсем суракинче активлăн ĕçлерĕç. Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явнă хыççăн, комсомол ретне 5 çамрăк кĕчĕç. Вĕсем хушшинче — уйĕç бригадин бригадирĕсем Васильевпа Николаев юлташсем, колхозра стахановецсем.

Н. ПАВЛОВ.

Польша патриочĕсен съезчĕ

Мускаврa июнĕн 8-мĕшĕнче Польша патриочĕсен с"езчĕ уçăлнă. С"езд делегачĕсем хушшинче Польша рабочийĕсем, хресченĕсем, интеллигенчĕсем пур. С"езда партизансен отрядĕнче кĕрешекен поляксен ксендзĕ фронт линийĕ урлă каçса килнĕ. Делегат членĕсем хушшинче нимĕçсем ирĕксĕр мобилизациленĕ çамрăк поляксем, халь Хĕрлĕ Çар енне куçнăскерсем те пур.

С"езда Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизирен делегатсен пысăк групи килнĕ, вăл дивизи халь ССР Союзĕнче йĕркеленет.

С"езд нимĕç захватчикĕсене хирĕç хĕçпăшалпа тăрса çапăçас, ССР Союзĕнчи поляксене Польшăпа Совет Союзĕн пĕрлехи тăшманне хирĕç кĕрешме пĕтĕçтерес, Польшăна Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес лозунгсемпе пулса иртнĕ.

С"езд президиумĕнче Ванда Василевская, ССР Союзĕнчи Польша дивизийĕн командирĕ полковник Берлинг, штаб начальникĕ Сивицкий, Парнас академик, партизан-ксендз Купш, доктор Дробнер, Польша сеймĕн депутачĕ пулнă Анджей Витос, Варшаврии рабочи трамвайщик Клос, Лодзь хулинчи профсоюз деятелĕ Виташевский, публицист Стефан Ендриховский.

Польша патриочĕсен союзĕ мĕнле ĕçлени çинчен Ванда Василевская отчет туса панă. Вăл Польшăн сутăнчăк правительстви 1939 çулта хăй халăхне сутнăранпа, çар командованийĕ салтаксене пăрахса хăварнăранпа поляксем ССР Союзĕнче мĕнле пурăнни çинчен уççăн каласа панă. Ирĕклĕхĕн хаяр тăшманĕпе—гитлеризмпа кĕрешесси кашни поляк-патриотăн историллĕ тивĕçĕ пулса тăни çинчен каланине с"езд делегачĕсем пĕтĕм кăмăлпах йышăннă.

Совет Союзĕнче Тадеуш Костюшко ячĕпе йĕркеленекен дивизие Совет Правительстви мĕн кирлине пурне те пама пулни çинчен калани с"езд делегачĕсене хавхалантарнă. Çавăн пекех Совет Союзĕнче пурăнакан поляксене пысăк пулăшу пани çинчен, Совет Правительстви вĕсене пулăшма çĕнĕ мероприятисем йышăнни çинчен каланине пысăк кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизи командирĕ Берлинг полковник поляксен дивизийĕ юлашки юн тумламĕ юлмиччен тăван çĕршывшăн çапăçма хатĕрри не шантарнă. Дивизи командирĕн заместителĕ тата ытти пренире тухса калаçă салтаксем Андерс генерал нимĕçсене хирĕç кĕрешме килĕшменни çинчен тарăхса каласа, геройла Хĕрлĕ Çарпа çумма-çуммăн тăрса суранланса пĕтнĕ Польшăшăн вилĕмле кĕрешме сăмах панă.

Купш ксендз нимĕçсем оккупациленĕ çĕр çинче партизансем мĕнле кĕрешни çинчен хумханулăн каласа панă. С"ездра çавăн пекех ученăйсем, писательсем, учительсем, рабочисем тата хресченсем тухса каланă.

С"ездăн иккĕмĕш кунĕнче те Польша дивизийĕн салтакĕсемпе офицерĕсем тухса каланă. Андерс çарĕнче офицер пулнă Букоемский, Сивицкий полковник поляксем хăйсен тăван çĕршывне ирĕке кăларассишĕн юлашки сывлăшчен çапăçасси çинчен шантарнă. Краковри Янгеллоновски университетри доцент Станислав Скшешевский нимĕç оккупанчĕсен аллинчи Польша шкулĕн, культурин кунçулĕсем çинчен хумханса каланă. Вăл хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссире Совет Правительстви çĕнĕрен издательствăсем, театрсем, шкулсемпе наука учрежденийĕсем уçни çинчен аса илтернĕ. Съезда пухăннисем Совет Союзĕнчи поляк шкулĕсене Совет Правительстви пулăшни çинчен пĕлтернине кăмăллăн йышăннă.

С"езд ССР Союзĕнче пурăнакан мĕнпур поляксене нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç кĕрешме йыхăракан ялав айне пĕрлешме чĕнсе резолюци йышăннă. С"езда пухăннисем Сталин юлташ патне Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн тăрăшнăшăн, нимĕçсене çĕмĕрнĕ хыççăн никама пăхăнман, вăйлă Польша туса хума шантарса каланăшăн хавхаланса тата тав туса телеграмма яма йышăннă.

Çавăн пекех с"езд Черчилль, Рузвельт тата Бенеш патне ССР Союзĕнчи поляксем, ирĕке юратакан халăхсемпе пĕрле тăрса, гитлерла агрессорсене хирĕç кĕрешме хатĕрри çинчен калакан телеграммăсем янă. (ТАСС).

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленум решенийĕсене тĕплĕн пурнăçлар

СĔНТĔР. (Телефонпа). ВКП(б) Обкомĕ хăйĕн черетлĕ XV-мĕш пленумĕнче çураки ĕçĕсен итогĕсене пăхса тухса ялхуçалăхĕн малашнехи задачисене палăртрĕ. Пленум республикăри колхозсенче ирхи çĕртме тăвас ĕç çителĕксĕр пынине кăтартса, çак çитменлĕхе халех пĕтерме хушрĕ. Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пур колхозсенче те ирхи çĕртме тумалли плана пурнăçламалла.

Пленум кăтартса пани пирĕн районри колхозсене тӳрремĕнех килсе тивет. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенче ирхи çĕртме тăвас ĕç чăтма çук кая юлса пырать. Кĕрхи тырăсем акма кăçал пирĕн колхозсем ирхи çĕртмене 6 пин гектар тумалла пулсан, халĕ мĕнпурĕ те 1.444 гектар çеç сухаланă. Малта пыракан хăшпĕр колхозсем çĕртме тăвас ĕçе тĕп вырăна хураççĕ пулсан, ытти нумай колхозсенче çак ĕç пачах çителĕксĕр пырать. Районри 28 колхоз паянхи куна çитсе те çĕртме тума тытăнман. Çакăн пек кая юлнине урăх чăтма çук. Ахмани ялсоветĕнче, тĕслĕхрен, пĕр колхоз та çĕртме тума пуçламан. Çатракасси, Оринино, Сĕнтĕр ялсовечĕсем енĕпе те çакнах палăртмалла.

Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз çĕртме пуссине 500 лав ытла тислĕк кăларса тăкни эрне иртрĕ ĕнтĕ. Тислĕк типсе пахалăхне çухатать. Анчах колхоз председателĕ Андреев юлташ халĕ те ирхи çĕртме тума васкамасть. Çăмăр пуласса кĕтеççĕ ракунта. „Çăмăр çуса илтĕр-ха, вара тухатпăр", теççĕ.

Ирхи çĕртме тумалли агротехникăн лайăх вăхăчĕ иртсе пырать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн çак ĕç çине тимлĕнрех çаврăнса пăхмалла. Райçĕрĕç пайĕнчи работниксен, агрономсен çĕртмене вăхăтра туса хăварассишĕн ответлăха туйса ĕçлемелле. Сĕнтĕр районĕ çураки ĕçĕсене начар мар туса ирттерчĕ. Ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсенче юлса пыма пирĕн колхозсен пĕр сăлтав та çук.

А. СОЛОВЬЕВ.

Нимĕç самолечĕсем Горький хулине тапăнни

Июнĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсем Горький хулине тапанма хăтланнă. Тăшман самолечĕсен пысăк пайне хула патне çитиччен хирсе янă. Тăшман самолечĕсен хула çине кĕрсе кайнă темиçе самолечĕ нимĕн тĕллевсĕр фугаслă бомбăсем пăрахнă. Халăх пурнăç[illegible] çурт çунса тухнă пушарсене часах сӳнтерсе лартнă.

Тапăнава сирсе янă чух зенитлă артиллери тата пирĕн авиаци 7 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиаци çухатусем пулман.

Нимĕçсем совет граждăнĕсен ушкăнне çунтарса янă

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинград облаçĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсем вырăнти халăха тискеррĕн асаплантараççĕ. Майăн 28-мĕшĕнче гитлеровецсен пĕр шайкки Сошихински районĕнчи Ясенцы ялĕнчи халăха пĕр çын юлмиччен хурах пусса çаратса тухнă. Çарату пĕтсен гитлеровецсем [illegible] не. Унтан пурт алăкĕсене хупса питĕрсе лартнă та, пӳрте краççинпа сапса вут тĕртнĕ. Çавăнта вара хăрушă вилĕмпе çаксем пĕтнĕ: 53 çулхи инвалид Герасим Романов, 60 çулхи Афанасьева, 13—14 çулхи 5 хĕрача тата ытти те нумай вилнĕ.

Ют çĕршывсенче

Пантеллери утравĕн гарнизонĕ парăннă

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, июнĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, тата ĕнер кăнтăрла союзниксен авиацийĕ Пантеллери утравне хаяррăн тапăнса тăнă. Çав тапăнусем вăхăтĕнче сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 37 самолетне пĕтерсе тăкнă. Тата унсăр пуçне тăшманăн 2 самолетне Тирренски тинĕс çинче пĕтерсе тăкнă. Çав операцисенчен союзниксен хăйсен базисене 6 самолет таврăнман.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ ятарласа кăларнă коммюникере Пантеллери утравĕн гарнизонĕ парăннă тесе пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакна паллă туса пĕлтерет: Пантеллери утравне йышăннипе союзниксен войскисен аллине Итали территорийĕн малтанхи 30 тăваткăл мили кĕрет.

Агентство каланă тăрăх, союзниксем тăшманăн утравсем çинчи тăватă чи кирлĕ малти форпосчĕсене йышăнса илмелле. Пантеллери çав утравсенчен пĕри пулса тăрать. Ытти виççĕшĕ, вĕсем—Сицили, Сардини тата Корсика пулса тăраççĕ. Пантеллерие йышăннине пула, союзниксен войскисем Сицилирен 63 мильăра кăна тăраççĕ. Вăтаçĕр тинĕсре нумайччен пынă вăрçăра Пантеллери утравĕ Италишĕн тинĕс-çар бази пулса тăрса, питех те пысăк усă кӳнĕ. Акгли суднисен караванĕсем «бомбăсен аллей» текен ансăр Сицили проливĕпе куçса çӳренĕ чухне пулса пынă сывлăшри тата тинĕсри çапăçусем вăхăтĕнче итальянецсен торпедăй катерĕсен базисем çав Пантеллери утравĕнче пулнă. Пантеллери таванĕнчен 2 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре вырнаçса тăракан аэродром нимĕçсемпе итальянецсен авиацийĕшĕн пĕртен пĕр аэродром пулнă. Хăй вăхăтĕнче çав аэродром çинчен вĕçсе хăпарса вĕсен самолечĕсем акăлчансен Мальта патнелле каякан транспорт суднисене массăллăн тапăнса тăнă.

Румыни Совет Союзĕпе Германи фронтне войскăсем янине хирĕç протестлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Антонеску çартан сĕрлăер офицер хăвалаласа кăларнă, вĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтне татах çарсем ярассине хирĕç пулнă. Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Румыни войскисем пе халĕ те çаплах усă курнине хирĕç темиçе область губернаторĕсем протестсем çырса алă пуснă.

Испани фашисчĕсем гитлеровецсене пулăшаççĕ

ВАШИНГТОН, июнĕн 10-мĕшĕ (ТАСС). „П. М." ятлă хаçат чылай статьясем пичетлесе кăларнă. Çав статьясенче Испания тĕрлĕрен майсемпе тĕнĕл держависене пулăшнине кăтартнă. Хаçат çапла çырать: Испани карапĕсем нимĕçсен подводнăй лодкисене союзниксен сутуилӳ карапĕсемпе кĕрешме пулăшаççĕ. Испани фалангисчĕсем Латинла Америкăра пропагандăпа шпионла ĕçсем туса пĕрлешӳллĕ нацисене вăрçă ĕçĕнче сиен кӳреççĕ. Испанире тата Испани Марокинче пиншер гитлерла агентсем чи пысăк постсем йышăнса ĕçлеççĕ, вĕсем Испани çарĕпе тата полицийĕпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Америкăри официальнăй çынсем каланă тăрăх, — тет çав хаçат малалла, — США-н Испанипе суту-илӳ туса тăнин пĕр тĕллевĕ вăл — Испани нейтралитетне çăлса хăварма тăрăшни пулать. Анчах та, тесе çырать хаçат, „эпир çав нейтралитетшăн тӳлессе тӳлетпĕр, çапах та нейтралитетне илейместпĕр".

Рузвельт тухса калани

ВАШИНГТОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закон тăрăх Греци правительствине хуралта çӳремелли карап панă май, Рузвельт сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче Рузвельт грексем тăшманпа кĕрешнине пысăк хак панă.

Рузвельт каланă тăрăх грексем тĕнĕл держависемпе çапăçни çакна кăтартса парать: çын ирĕклĕхшĕн кĕрешме яланах хатĕр тăнине тата ирĕклĕхе сиеле кăларассишĕн хăйĕн юлашки пурнăçне те пама яланах хатĕр пулнине нимĕнле вăй та пĕтерсе лартма пултараймасть. «Халĕ, — тенĕ Рузвельт, — Греци çаралса юлнă çĕршыв. Пиншер çын выçăпа вилсе выртнă, халĕ те пиншер çын вилет. Паян Греци — тĕнĕл держависем пĕтĕм тĕнчене мĕн кăтартма шутланине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать. Çапах та грексем хăйсен тĕп çĕршывĕнче те, ытти çĕршывсен сыранĕсенче те кĕрешме пăрахмаççĕ, вĕсене никам та никăçан та чĕркуççи çине тăратаймĕ. Пусмăрлăха çĕнтерсе ирĕке тухнă грексем Акрополĕпе Парфенон хӳттинче çĕнĕрен хăйсене тивĕç правительство туса хурас кун çитĕ».

КĔСКЕН

▲ Китай çарĕсем Хубэй провинцин кăнтăр пайĕнчи Иду хулине пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ.

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче апрель уйăхĕнче 5 миллиард долларлăха яхăн хĕçпăшал туса кăларнă. США-н вăрçă расходне, пĕтĕмĕшпе илсен, апрель уйăхĕнче 7 миллиард та 290 миллион доллар кайнă.

▲ Виçĕ çул хушши пуç пулса тăрса, гитлеровецсем Францире 47 пин француза персе пăрахнă, 200 пин çынна концентрациллĕ лагерьсене тытса хупнă.

▲ Греци оккупациленĕренпе унта 500 пин грека яхăн выçăхса е чирлесе вилнĕ, е ĕмĕрлĕхех ĕçе юрăхсăр пулса юлнă.

▲ Румынире тăшмансемпе çыхăну тытать тесе айăплаcа премьер-министр пулса ĕçленĕ Георгий Татарескуна тата Румынин политикăллă паллă деятельне Константин Буршана арестленĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР Наркомлесĕн Атăл тăрăхĕнчи лесотехнически техникумĕ 1943—44-мĕш вĕренӳ çулне студентсем йышăнасси çинчен пĕлтерет

Техникумра СССР-ти вăрман промышленноçĕ валли работниксем хатĕрлекен икĕ отделени пур: 1) вăрман хуçалăхĕ валли техниксем хатĕрлекен отделени тата 2) вăрман хатĕрлевĕн техник-технологĕсене хатĕрлекен отделени.

Вĕренесси 3 çул хушши вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 35 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ.

Туллимар вăтам шкултан тата 7-мĕш класран 1943 çулта вĕренсе тухнисене тата отличниксене испытанисемсĕрех йышăнаççĕ.

Урăх вырăнтан килнĕ студентсене общежити параççĕ. Столовăй пур. Вĕрентесси лайăх кабинетсенче тата пысăк квалификациллĕ научнăй работниксем вĕрентеççĕ.

Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: вĕреннине ĕнентерекен свидетельство, автобиографи, сывлăх çинчен пĕлтерекен справка, çурални çинчен пĕлтерекен справка, виçĕ фотокарточка.

Заявленисене 1943 çулхи августăн 25-мĕшĕччен илеççĕ.

Занятисем сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене директор ячĕпе çак адреспа ямалла: Мушмари поселокĕ, Звенигово районĕ, Мари АССР Лесотехникум.

Шупашкарта ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ:

бухгалтер-ревизор, главнăй бухгалтер заместителĕ, кинотеатр бухгалтерĕ, кинотеатр администраторĕ, металпа ĕçлекен токарьсемпе слесарьсем, склад заведующийĕ, газогенераторнăй машина шоферĕ, кинотеатрти билет сутакан кассирсем, билетерсем, паровой отоплени механикĕ, водопроводчик, уборщицăсем, полотер-вахтер.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Советсен çурчĕ, 3-мĕш хучĕ, 317-мĕш пӳлĕм, ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн кадрсен пайĕ.

2—2

1943 çулхи май уйăхĕн 6-мĕш кунĕнче Ишлей районĕнчи Шетмĕпуç ялсоветне кĕрекен «Звезда» колхозăн кӳлмен тиха çухалнă. Паллисем çаксем: 2 çул та 2 уйăхра, тĕсĕ сутă хăла, хӳрипе силхи хура, çамки çинче шурă паллă пур.

Пĕлекенсен колхоз правленине çул-те кăтартнă адреспа пĕлтермелле.

Кĕрешӳве чĕнекен поэма

(А. Эсхелĕн „Ăмăрткайăк" поэмине вулакансен çырăвĕсем тăрăх)

Чăваш поэчĕн Аркадий Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» поэмине вулакансем редакцие хăйсен шухăш-кăмăлĕсене пĕлтерсе тăраççĕ. Поэма пирки тылри ĕççыннисем çеç мар, фронтри юлташсем те çыраççĕ.

«Ку поэма — Аркадий Эсхель ку таранччен çырнă произведенисенчен чи пысăкки пулса тăрать, — тесе çырать Степан Аслан. — Ăна çырса, поэт вăрçă кунĕсенче пысăк ĕç турĕ. Пĕр енчен — ку поэма чăвашсен ялемлĕ литературин пысăк çитĕнĕвĕ, тепĕр енчен — пĕтĕм чăваш халăхĕн çĕнтерӳллĕ кунçулне кăтартса паракан, ирсĕр тăшмансене тĕппипех çĕмĕрсе тăкма чĕнекен поэма пулса тăрать.

Поэмăна вуланă хыççăн хамăрăн паттăр землякăн — Совет Союз Геройĕн Федот Орловăн сăнĕ пирĕн умма чăн-чăн пурнăçри пек чĕррĕн тухса тăрать. Федот Орловăн пурнăçĕ чăваш халăхĕн пĕтĕм пурнăçĕпе уйăрăлми таччăн çыхăнса тăрать. Çакна поэт яр-уççăн кăтартса панă.

Эпир поэмăна юратса вуласа пытăмăр. Ăна пур çĕрте те юратса вулаççĕ. Мăншĕн тесен ку поэма — хальхи вăхăтра питех те кирлĕ япала, ирсĕр тăшмана тĕппипех çĕмĕрсе тăкма чĕнекен поэма.

Эпир никăçан та манмастпăр: тăшман вăйлă пулсан, ăна çĕнтерме вăй кирлĕ, тăшман чее пулсан — ăна çĕнтерме ăс кирлĕ, тăшман хаяр пулсан, ăна çĕнтерме хаярлăхпа хурайманлăх кирлĕ. Вĕсем пирĕн пур! Çак шухăшсем поэмăна вуланă хыççăн пуçра пухăнса çитеççĕ.

Эпир, вулакансем, чăваш писателĕсемпе поэчĕсем хамăрăн геройсем çинчен тата та паха япаласем çырасса кĕтетпĕр».

Кашнăр Микули (Комсомольски районри Аслă Çĕрпӳ ялĕнчен) çапла çырать: «Ăмăрткайăк» поэма питĕ кăмăла кайрĕ. Ку поэма нумай усă кӳрет. Поэмăна вуласан çак шухăш патне пырса тухатăп: пирĕн çĕршывра ĕмĕтленнĕ ĕмĕте пурнăçлама пур майсем те пур. Эпĕ, вăтă пулсан та, поэмăна вуласа пынă чухне хамăн пурнăçа темиçе майлă та аса илсе тухрăм. Эпир ӳснĕ вăхăтра хальхи пек телее тупма ирĕк пулман çав. Чухăн-тăлăхсем хĕн-хур курса, асапланса вилнĕ. Вĕсене вĕрентмен, пулăшу паман.

Аркадий Эсхеле малалла та çакăн пек паха та ырă ĕçсем тума сунатăп». «Ăмăрткайăк» поэмăн сыпăкне Юлхир хушаматлă Силпи чăвашне вуласа патăм, — тесе çырать фронтран чăвашсен поэчĕ Александр Алга. — Пуçне пăркала-пăркалах мухтарĕ. Хамăн шухăша поэмăна пĕтĕмĕшпех илсен каласа парас кăмăлăм пур. «Ăмăрткайăк» уйрăм кĕнеке пулса вĕçсе килессе кĕтетĕп.»

Действующи Çартан капитан Михаил Якимов çапла çырать: «Эпĕ чăвашсен ытти поэчĕсем вăрçă кунĕсенче мĕнле ĕçленине пĕлместĕп, поэма тĕрĕх пăхсан, Аркадий Эсхель тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕ вара. Вăл хăйĕн произведенийĕнчи героя питех те хĕрӳ юратупа юрататъ, унăн пурнăçне тĕрĕс сутатассишĕн хăйĕн чĕрери мĕнпур пултарулăхне панă.

Эпĕ поэзи чĕлхине пĕлекен ăстаçă мар, поэма чĕлхине манăçрах хаклакансем пулĕç. Анчах, мĕнпур вулакансем пекех, эпĕ автора çак ĕçшĕн ырă сунса саламласшăн, çакăн пек паха япаласем тата ытларах çырма сунасшăн.

Хальхи вăхăтра поэмăн кашни сăмахĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкма малалла чĕнни, тăшмана курайманлăх пурăнма, тăван çĕршыва юратма, тăван халăхсен культурипе чыслăхне, ирĕклĕхне хӳтĕлеме чĕнни паха. Паян нимĕçе вĕлермелле. Ăна пур майсемпе те вĕлермелле! Поэзи нимĕçсене ытларах вĕлерме пулăштăр, пирĕн чăваш поэзийĕ те окопсене, боецсем патне çиттĕр, тăван поэзи ирсĕр тăшмана вăйлăн пырса саптăр. Çакăн пек пăхатăп эпĕ хальхи вăхăтри тăван поэзи çине.

Поэт «Ăмăрткайăк» поэмăпа пирĕн пата—окопсене, боецсем патне килчĕ. Ку—питех те кирли.

Акă мĕнле шутлатăп эпĕ «Ăмăрткайăк» пирки. Эпĕ поэма пичетленсе тухнă хаçатсене темиçешер экземпляр ярса пама ыйтасшăн. Эпĕ вĕсене боецсене салатса парăттăм. Вĕсем вулачăр та çакăн çинчен пĕлччĕр: вăхăт иртнĕ май, чăваш поэчĕсен ытти поэмисемпе сăввисенче, калавĕсемпе очеркĕсенче, романĕсемпе повеçĕсенче вĕсен пурнăçне те çутатса парĕç. Вĕсем çакна асра тытса кĕрешчĕр: пирĕн тус-литераторсем те фронтри боецсемпе командирсем тăвакан ĕçех тăваççĕ»

Чăвашсен поэчĕ Уйăп Мишши поэмăна пысăккăн хаклать. «Ăмăрткайăка» саванса, килентсе вуласа тухрăм, нумай пулатчĕ-ха эпир сăвă чĕлхипе паллă та пысăк япала курманни. Вулатăп та, тăван поэзишĕн, хăйĕн хăватлă сунаčĕсене саракан тăван поэзишĕн савăнатăп. Поэмăна аван, ăспа тарăннăн çырнă. Асăрханă çитменлĕхсене поэма пирки ятарласа çырнă чухне кăтартса хăварасшăн.

Ку поэма пирĕн поэзишĕн паллă произведени пулса, аслă вăрçă тапхăрĕнчи паллă çитĕнӳсенчен пĕри пулса, тăван сыруллăх кунçулне — историне кĕрсе юлĕ. Пысăк ĕç тунă. Вăл ĕç халăх пурнăçне кĕрсе юлĕ, ӳлĕм ăна тата ытларах киленсе вулĕç».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—067, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательствăн контори—9—23.